Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

76-77 (8240-8241) №№ * Юн кун, 2014 ҫулхи юпа (октябрь) уйӑхӗн 8-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Ҫул-йӗр строительстви

## Тикӗс ҫул – ял илемӗ



***Районта ҫулсем тӑвасси тата вӗсене пӑхса тӑрасси тивӗҫлӗ шайра пулнине кашни ял тӑрӑхӗнчех курма пулать. Эсир паянхи сӑн ӳкерчӗкре "Автодорсервис" чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество ӗҫченӗсене Катькас ял тӑрӑхӗнчи Шатракассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул тӗлӗнче ачасене ҫул урлӑ хӑрушлӑхсӑр каҫса ҫӳреме условисем туса парассипе ӗҫленине куратӑр. "Илемлӗ те тикӗс ҫул яла хӑт кӗртет. Шкул тата обществӑлла автотранспорт чарӑнӑвӗ тӗлӗнче вара унӑн хӑрушсӑрлӑхӗ уйрӑмах пысӑк пулмалла. Ҫакӑнта хамӑрӑн ӗҫ пӗлтерӗшне куратпӑр", – терӗҫ кӗске тӑхтавра ҫул юсакансем. Вӗсем (сӑн ӳкерчӗкре сулахайран сылтӑмалла): Ирина Степанова, Светлана Савельева, Елизавета Алексеева, Валентина Никитина. Хӗрарӑмсем пӗрремӗш ҫул мар ӗнтӗ ҫул-йӗр тӑвас-юсас ӗҫре. Хӑйсен ӗҫне пӗлсе пурнӑҫлакан ӗҫченсем ҫул ҫинчи кашни кӑлтӑках вӑхӑтра пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ.***

***– Нумаях кӗттерменӗпӗр, пуҫланӑ ӗҫе вӗҫлӗпӗр. Ҫавна валли пирӗн умра чӑрмавсем ҫук. Кӑҫал пирӗн организаци кунтисӗр пуҫне Уйкас Янасал, Ильинка, Оринин, Хорнуй, Йӳҫкасси, Ярапайкасси, Ярославка ял тӑрӑхӗсенче автоҫулсем юсассипе ӑнӑҫлӑ ӗҫлерӗ. Кусемсӗр пуҫне Мӑн Хураҫка – Ишмула ҫула асфальт витрӗмӗр, – савӑнӑҫлӑн хуравларӗ ҫул-йӗр ӗҫӗнче ҫиччӗмӗш ҫул вӑй хуракан И. Степанова.***

***Эпӗ уйрӑлса утнӑ май ҫул-йӗр ӗҫченӗсем пуҫӑннӑ ӗҫе малалла тӑсрӗҫ. Вӗсем хӑйсем умне лартнӑ тӗллевӗсене пурнӑҫласси мана иккӗлентермерӗ.***

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Сӗр ӗҫченӗ уява хатӗрленет

## Тыр-пул уявӗ – октябрӗн 17-мӗшӗнче

Ыранхи кунпа пурӑнакан хресчене кӑҫал ҫут ҫанталӑкӑн кашни саманчӗ тулӑх тыр-пул туса илме, ӑна вӑхӑтра пуҫтарса кӗртсе кӗлете тирпейлӗ упрама хума май пачӗ. Малта пыракан ҫӗнӗ технологисемпе анлӑн усӑ курса тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене, ҫӗр улмипе пахча ҫимӗҫе, тымар ҫимӗҫе тухӑҫлӑ туса илнӗ хресчен паян районти Тыр-пул уявне хатӗрленет. Район администрацийӗн авӑн уйӑхӗн 23-мӗшӗнчи хушӑвӗпе асӑннӑ уяв кӑҫал Муркаш ялӗнче «Сывлӑх» ФСК умӗнчи лапамра юпа уйӑхӗн 17-мӗшӗнче иртет. Вӑл ял хуҫалӑх предприятийӗсен "Кӗр парнисем" выставка-ярмӑркки ӗҫлеме пуҫланнипе 9 сехетре уҫӑлать.

Уява пыракансем суту-илӳ предприятийӗсемпе обществӑлла апатлану организацийӗсен ӗҫӗпе ҫывӑх паллашма пултарӗҫ. Пахча ҫимӗҫ, улма-ҫырла, аш-какай тата ытти тӗрлӗ ҫимӗҫ туянӗҫ. Кунпа пӗрлех шкулсенчи ӗҫ коллективӗсен слечӗ те уява хӑйне евӗр сӑн кӗртӗ. Спорта кӑмӑллакансем мини-футболла выляса тата пӑт пуканӗ ҫӗклессипе ӑмӑртса ҫынсен канӑвне йӗркелӗҫ. Уявра кунӗпех юрӑ-кӗвӗ янӑрӗ.

Пырса куракансен ӳкӗнмелле пулмӗ. Маттур ӗҫлекенӗн туллин савӑнма та ирӗк пур.

**Хамӑр инф.**

Йышӑну

## Техникӑна – хӗллехи управа

Ҫӗр ӗҫченӗ кӗрхи уй-хир ӗҫӗсене вӗҫленӗ май ЧР Ял хуҫалӑх министерствипе ҫӗр ӗҫӗнче ӗҫлекен техникӑна пӑхса тӑракан патшалӑх инспекцийӗ юпа уйӑхӗн 6 – 24-мӗшӗсенче "ЧР ял хуҫалӑх предприятийӗсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче техникӑна управа лартассипе республикӑри смотр-конкурс ирттересси ҫинчен" пӗрлехи приказ кӑларчӗҫ. Унпа килӗшӳллӗн иртекен тӗрӗслевсенче техникӑна хӗллехи управа епле лартнине тӗрӗслессӗ, ял хуҫалӑх техникин комплектлӑхне пӑхасси, парк территорийӗсене тимӗр-тӑмӑртан тасатасси, ӗҫ хӑрушсӑрлӑхӗн правилисене пӑхӑнасси кун йӗркинче тӗп вырӑнта пулаҫҫӗ.

Район шайӗнче ҫакна валли йӗркеленӗ комисси ӗҫне район хаҫачӗ тӑтӑш ҫутатса тӑрӗ.

Комисси хӑйӗн пӗтӗмлетӗвне республика шайне юпа уйӑхӗн 27-мӗшӗччен тӑратать.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР патшалӑх техника надзор инспекцийӗн районти инспекторӗ.**

Сывӑ пурнӑҫ йӗркишӗн

## П. Давыдова асӑнса

РФ тата ЧР ял хуҫалӑхӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченне, «Хисеп палли» орденӗн кавалерне, Муркаш районӗн хисеплӗ ҫыннине, «Ударник» хуҫалӑха нумай ҫул ертсе пынӑ Платон Павлович Давыдова асӑнса ҫитес шӑмат кун районта пӗрремӗш хут волейбол турнирӗ иртет. Унта районти предприятисемпе организацисен, вӗренӳ тата ытти учрежденисен физкультура командисем хутшӑнма пултараҫҫӗ. Ҫакна валли ӑмӑрту кунӗнче 10 сехетчен заявка тӑратмалла.

Ӑмӑртура малти вырӑнсене йышӑннисене парнесемпе тата медальсемпе чыслаҫҫӗ, ҫӗнтерӳҫӗ команда куҫса ҫӳрекен кубока та тивӗҫет. Унсӑр пуҫне лайӑх вылякансене уйрӑм номинацисенче те палӑртаҫҫӗ.

Ӑмӑрту октябрӗн 11-мӗшӗнче "Сывлӑх" ФСК-ра 10 сехет ҫурӑра пуҫланать.

## Ҫын хӑй яваплӑ

Республикӑн та, кашни муниципалитетӑн та хӑйӗн "Сывлӑх профилӗ" пулӗ. Кун пирки хаҫатра маларах та пӗлтернӗччӗ.

Ҫак "профиле" туса хатӗрлессинче халӑхран ыйтса пӗлнине те шута хураҫҫӗ. Ҫак тӗллевпе социологи ыйтӑмне йӗркеленӗ. Унти ыйтусем ҫине кашниех хӑйӗн шухӑшне палӑртса хурав пама пултарать. Ыйтӑма район сайтӗнче те, республикӑн влаҫ органӗсен порталӗнче те вырнаҫтарнӑ.

Октябрӗн 7-мӗшӗ тӗлне ҫак ыйтӑма 110 ҫын хутшӑнни паллӑ, вӗсенчен 57-шӗ – 31–50 ҫулсенчи ҫынсем, 51–60 ҫултисем 31 ҫын. Ытларахӑшӗ хӗрарӑмсем – 93 ҫын. Ыйтӑма хутшӑннисенчен 96 -шӗ аслӑ пӗлӳ илнӗ ҫынсем. Хальхи вӑхӑтра 61 ҫын хӑйӗн сывлӑх шайне "тивӗҫтерет" тесе хакланӑ. Ҫав вӑхӑтрах сывлӑх ҫыншӑн чи пӗлтерӗшли тесе 99 ҫын хуравланӑ. 97 ҫын сывлӑхшӑн чи малтан ҫын хӑй яваплине палӑртнӑ. Сывлӑх вара пурнӑҫ йӗркинчен килнине нумайӑшӗ ӑнланать – 99 ҫын. Ыйтӑма хутшӑннисенчен 94 ҫын пирӗн республикӑра ытларах чӗрепе юн тымарӗсен чирӗсем сарӑлнӑ тесе шутлаҫҫӗ.

Ҫак тата ытти хуравсемпе эсир те ыйтӑма хутшӑннӑ хыҫҫӑн паллашма пултаратӑр. Апла пулсан ӗҫе кая хӑвармасӑр хамӑр район сайтне кӗрӗр те "Актуально" пайра ыйтӑма хутшӑнӑр.

Каласа хӑвармалла, хурав панисенчен 93 ҫын "Сывлӑх профильне" туса хурассинче пулӑшу пама хатӗррине палӑртнӑ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпӑр



Юратнӑ мӑшӑра, хисеплӗ аттене, кӑмӑллӑ асаттене – Опрыскьялӗнче пурӑнакан **Александр Павлович ПАВЛОВА** 80 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Чӑваш юманӗ пек ҫирӗп сывлӑх, чӑваш сурпанӗ пек вӑрӑм ӗмӗр сунатпӑр. Пире савӑнтарса пурӑнма Турри сана тата нумай-нумай ҫул усратӑр. Эпир сана юрататпӑр, сана хисеплесе сан умра пуҫ таятпӑр.

**Ӑшӑ салампа: мӑшӑрӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, ывӑлӗпе кинӗ, мӑнукӗсем ҫемйисемпе, 3 кӗҫӗн мӑнукӗ.**

Форум

## Чӑваш Енре – спорт уявӗ

Октябрӗн 9–11-мӗшӗсенче Чӑваш Енре Пӗтӗм тӗнчери "Раҫҫей – спорт ҫӗршывӗ" спорт форумӗ иртет. Ҫакна май Шупашкарта массӑллӑ спорт мероприятийӗсем йӗркелеҫҫӗ.

Спорт уявне ыран Шупашкарти Хӗрлӗ площадьре "ҫӑлтӑрпа" зарядка тунинчен пуҫлаҫҫӗ. Ӑна "Россия 2" телеканалӑн спорт комментаторӗ Дмитрий Губерниев ертсе пырӗ. Зарядкӑна хутшӑнма ирхи 9 сехет тӗлне 10 пин ытла ҫын пухӑнӗ.

Уява 11 сехетре ҫав вырӑнтах спортсменсен парачӗ малалла тӑсать. Унта спорт федерацийӗсем, спорт шкулӗсен коллективӗсем тата паллӑ спортсменсем хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем утса иртессине Мускаври 1980 ҫулта иртнӗ Олимпиадӑн палли Олимп Упи, хӑвӑрт утассипе 2008 ҫулта Шупашкарта иртнӗ тӗнче Кубокӗн палли Кӑвакал тата 2015 ҫулта Шупашкарта ирттерме палӑртнӑ ҫӑмӑл атлетикӑн Европа команда чемпионачӗн палли Ҫӑлтӑр уҫаҫҫӗ.

Ҫак парада 800 ҫынна яхӑн хутшӑнакан флешмоб тӑсать. Вӗсем "ГТО" тесе ҫырӗҫ. Ун хыҫҫӑн вара пурте ГТО нормативӗсене пурнӑҫлама пултараҫҫӗ.

Шӑп та лӑп 12 сехетре ҫӗр-шывра пӗрремӗш хут иртекен Пӗтӗм тӗнчери утассин кунӗ старт илет. Унта 15 пине яхӑн ҫын хутшӑнӗ. Вӗсем Чӑваш Енри Олимп резервӗсен шкулӗнчи хӑвӑрт утакансем ертсе пынипе залив тавра утӗҫ. Ҫак вӑхӑтра Пӗтӗм Раҫҫейри "Орленок" ача-пӑча центрӗпе тата Сочири Олимп паркӗпе ҫыхӑнса видеоконференци иртет.

12 сехетрен пуҫласа 17 сехет ҫурӑччен "Спартак" стадионта ГТО нормативӗсене пурнӑҫлакансем хуҫаланӗҫ. Йӗркелӳҫӗсем 1 пин ытла ҫынна кӗтеҫҫӗ.

Кӑнтӑрла 160 ҫемье хутшӑннипе Хӗрлӗ площадьре "Атте, анне тата эпӗ – спортпа туслӑ ҫемье" ача-пӑча уявӗ пуҫланать. Ҫав вӑхӑтрах "Энергия" стадионта ачасемпе ҫамрӑксем ҫӑмӑл атлетикӑра тата мини-футболра вӑй виҫӗҫ.

13 сехетрен пуҫласа 18 сехетчен Шупашкарти тӗп урам – К. Маркс урамӗ – спорт бульварӗ пулса тӑрать. Унта 30 ытла спорт площадки ӗҫлет.

Форум тӑршшӗпех спорт отраслӗн ҫӗнӗ аталанӑвне халалланӑ тӗрлӗ выставкӑпа экспозицисем ӗҫлеҫҫӗ.

Октябрӗн 9-мӗшӗ – автомобильсӗр кун. Ҫакна Шупашкар хула администрацийӗн пуҫлӑхӗ А. Ладыков транспорт хатӗрӗсемпе ҫӳрессине вӑхӑтлӑх чармалли ҫинчен калакан йышӑнупа та ҫирӗплетнӗ.

Ҫырӑнтару – 2015

## Хаклӑ вулаканӑм!



**"Ҫӗнтерӳ ялавӗ" хаҫата 2015 ҫулхи январь уйӑхӗнчен илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫӗ. Апла пулсан почтальонсемпе тӗл пулма васкӑр. "Ҫӗнтерӳ ялавӗ" хаҫата 6 уйӑха ҫырӑнмалли хак – 347 тенкӗ те 28 пус.**

**Хаҫат редакцийӗ.**

# Хальхи пенсионерсен пăлханма кирлĕ мар

**Пенси ыйтăвĕсемпе**

***Пĕлетпĕр ĕнтĕ, çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенси шутласа памалли çĕнĕ йĕрке пурнăçа кĕме пуçлать. Çавна май пенсие тухма хатĕрленекенсен те, çавăн пекех халĕ пенси илсе тăракансен те хăшĕсен ыйтусем çуралаççĕ: çĕнĕ пенси формули хальхи пенсионерсене пырса тивмĕ-и, ĕçлекен пенсионерсене çĕнĕ законодательствăпа килĕшÿллĕн пенси унченхи пекех тÿлесе тăрĕç-и, педагогсемпе медицина ĕçченĕсен вăхăт çитмесĕрех пенсие тухассин условийĕсем сыхланса юлĕç-и? Ку ыйтусем пирки Пенси фончĕн районти пайĕн ертÿçине Андрей Юрьевич АЛЕКСАНДРОВА каласа пама ыйтрăм:***

– Чăваш Республикипе илес пулсан хальхи вăхăтра 300 пин çынна яхăн ватлăха пула паракан ĕç пенсине вăхăтра илсе тăрать. Пенсионерсем пĕтĕмпе 353,5 пин çын. Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 10395 тенкĕпе танлашать. Ку вăл пенсионерăн пурăнма кирлĕ минимумĕн Чăваш Республикинчи кăçалхи иккĕмĕш кварталти виçинчен (5689 тенкĕ) 1,8 хут пысăкрах.

Пенси фончĕ çавăн пекех федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансем валли уйăхсерен паракан укçа тÿлевĕсене палăртать. Вĕсен шутне инвалидсем, чернобылецсем, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тĕрлĕ çапăçусене хутшăннисем, вилнĕ çар çыннисен тăлăх мăшăрĕсем, блокадниксем, концлагерьсенче пулнисем кĕреççĕ. Республикăра çак вăхăта федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракан 108 пин çын. Вĕсене уйăхсерен тÿлесе тăракан укçа виçи 1914 тенкĕпе танлашать.

Раççей Правительствин хушăвĕпе килĕшÿллĕн Пенси фончĕ Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тĕрлĕ çапăçусене хутшăннисен социаллă пурнăç шайĕ пирки пĕтĕмĕшле патшалăх базине йĕркелесе пырать. Чăваш Енре унта 40 пине яхăн ветеран пирки информаци пур.

Паянхи куна илес пулсан 2015 çултан тытăнса пенсисене çĕнĕ формулăпа шутласа пама пуçăнассипе хатĕрленÿ ĕçĕ анлă сарăлнă. Çак вăхăтчен пенсие тухнисен вара пăлханма кирлĕ мар тесе каласшăн. Вĕсен пенси виçи улшăнмасть, унченхи шайрах юлать.

Çĕнĕ законодательствăпа килĕшÿллĕн ĕçлекен пенсионерсен ĕç укçипе пĕрлех пенсие те тулли виçепе илсе тăрассин прави сыхланса юлать. Çуллен пенси виçине пенсин 3 коэффициенчĕ шайĕнче çĕнĕрен шутласа палăртĕç. Сывлăхшăн сиенлĕ тата хăрушă производствăра вăй хунăшăн вăхăт çитмесĕрех пенсие тухмалли ятарлă стажа шутласа пенси пама пуçăннă чухне ĕç паракан ĕçлекен çыншăн хушма взноссем тÿлесе тăнине шута илме тивĕç. Педагогсен, çавăн пекех медицина ĕçченĕсен те вăхăт çитмесĕрех пенсие тухассин йĕркипе условийĕсем сыхланса юлаççĕ.

Çĕнĕ пенси системин çĕнĕлĕхĕсенчен çакна палăртса хăвармалла. Çын пенси илмелли ÿсĕм çулне çитсен те пенси илме тытăнма заявленипе пымасть, унччехи пекех хăйĕн вырăнĕнчех ĕçлет пулсан, унăн пенси виçи палăрмаллах ÿсет. Пенсие тухнă пулсан та çакăн пек ĕçленĕ кашни çулшăн унăн страхланă пенсийĕ те, çавăн пекех пенси çумне хушса паракан çирĕплетнĕ тÿлев сумми те ÿссе пыраççĕ. Акă çын пенси ÿсĕмне çитнĕ хыççăн пенси илме тытăнмасăр 5 çул ĕçлерĕ пулсан, хушса паракан çирĕплетнĕ тÿлев виçи 36 процент, страхланă пенси 45 процент ÿсеççĕ. Енчен те 10 çул ĕçлес пулсан вара çирĕплетнĕ тÿлев виçи те, страхланă пенси сумми те 2 хут ытла ÿсĕç.

2015 çултан вăя кĕме пуçăнакан пенсин çĕнĕ законодательстви пирки ял çыннисемпе тĕл пулнă май, ĕç коллективĕсенче пулнă чухне тăтăшах ăнлантарса пама тăрăшатпăр. Профсоюз организацийĕсене те ку ĕçе явăçтаратпăр. Кунсăр пуçне çавна та каласа хăварнă пулăттăм. Сирĕн ыйтусем пур пулсан эсир ăна Пенси фончĕн сайтĕнче электрон приемнăйĕ урлă та пама пултаратăр. Çавăн пекех тÿлевсĕр Skype программăпа усă курса видеоконсультаци те илме май пур.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

# Чăваш Ен пенсионерĕн портречĕ

**Статистика**

**Епле пулсан та паян аслă ăру пирки сахалах мар калаçаççĕ. Тĕрĕссипе чăн та кам-ха вăл паянхи аслă ăру? Чи малтанах ку граждансем – Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем, вăрçă курнисем, вăрçă хыççăнхи пĕрремĕш çулсенчи ачасем. Шăпах вĕсем çине пырса тивеççĕ паян халăх ватăлать, аслă ăрăва тивĕçлĕ пурнăç туса пама вара укçа-тенкĕ çитмест тенисем. Çавăн пекех-ши ку?**

Ватă çынсен кунĕ умĕн статистиксем Чăваш Ен пенсионерĕн вăтам статистика портретне туса хатĕрленĕ. Иртнĕ çул кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш Республикинче пурăнакан кашни виççĕмĕш çынна яхăн пенсионер шутланать. Республикăра пенси ÿсĕмĕнчисене пĕтĕмпе 350 пин ытла çынна регистрациленĕ (199 пин çын хуласенче тата 153 пин çын ялсенче пурăнать). Вĕсенчен ытларахăшĕ Шупашкарта пурăнать – 118 пин çынна яхăн. Чи сахалли Çĕмĕрле районĕнче – 4 пин çынна яхăн. Çав вăхăтрах 1000 çын пуçне миçе пенсионер тивнине шута илес пулсан, Улатăр районĕнче вăл чи пысăкки (414), Шупашкар районĕнче чи пĕчĕкки (233).

Хĕрарăм пенсионерсем арçынсенчен 2 хут нумайрах: 235 пин çын тата 116 пин çын.

Çавна хушса каламалла. 2010 çулхи халăх çыравĕн итогĕсем тăрăх 100 çул урлă каçнисем 42 çын шутланнă (8 арçын тата 34 хĕрарăм).

Пенсионерсенчен ытларахăшĕ – ĕç пенсийĕ илсе тăракансем. Пенсин вăтам виçи 9282 тенкĕпе танлашать. Хуласенче пурăнакан пенсионерсен пенсийĕн вăтам виçи 9611 тенкĕпе танлашать пулсан, ялсенче пурăнакансен – 8220 тенкĕ.

Хĕрарăмсен пенсийĕн вăтам виçи 2014 çул пуçламăшĕ тĕлне 8894 тенкĕпе, арçынсен 9236 тенкĕпе (3,7 процент пысăкрах) танлашнă. Пенсин вăтам виçи республикăри вăтам кăтартуран ытлараххисен шутĕнче Шупашкар (9763 тенкĕ), Çĕнĕ Шупашкар (9612 тенкĕ), Çĕмĕрле (9431 тенкĕ), Улатăр




(9429 тенкĕ) хулисем, чи пĕчĕкки – Шăмăршă районĕнче (7396 тенкĕ).

Пенсионерăн пурăнма кирлĕ минимумĕпе танлаштарсан, хулара пурăнакан пенсионерсен пенсийĕн вăтам виçи 193,7 процентпа, ялта пурăнакансен 165,6 процентпа танлашать.

Ватлăха пула пенсие тухнă пулин те, чылайăшĕ ĕçлеме пăрахмасть – республикăра кун пеккисем 115 пин ытла çын, тепĕр майлă каласан, кашни виççĕмĕш пенсионер. Вăл шутран 38 пин çын – арçынсем, 77 пин çын – хĕрарăмсем. Çав вăхăтрах ĕçлекен пенсионерсем хуласенче 81 пин çын тата ялсенче 34 пин çын.

Психологсем палăртнă тăрăх нумай çыншăн харпăр хăйĕн тивĕçĕ пурнăçлакан ĕçпе çыхăннă. Нумай чухне çакă çемье тупăшĕнчен те килмест. Ĕççĕр юлнă çын малашнехи пурнăç тĕллевĕпе пĕлтерĕшне çухатать, хăйне хăй хисеплеми пулать, чирлесси енĕпе те йывăрлăхсем пулма пултараççĕ. Çавăнпа та аслă ăру çыннисем пенсие тухнă май хăйсене урăх ĕçре тĕрĕслесе пăхма тăрăшаççĕ. Сăмахран, 15 çултан тытăнса 72 çула çитичченхи ÿсĕмри çынсене ĕçпе тивĕçтерессин проблемине тишкерни çавна кăтартса панă. 60 – 72 çулхи арçынсен тата 55 – 72 çулсенчи хĕрарăмсен 9 процентĕ е 1,6 пин çын 2013 çулта ĕç ширанă. Аслă ăру çыннисен 32,1 процентĕ тĕрлĕ çĕрте вăй хурать. Пенсие тухнă ял çыннисенчен 58 процентĕ харпăр хăйĕн хушма хуçалăхĕнче продукци туса илессипе ĕçлет. Апла пулсан аслă ăру ĕç кăмăла çĕклетĕр, кану усăллă, хавхалану интереслĕ пултăр тесе тăрăшать. Анчах та пур чухне тата пурин те çакă пурнăçланаймасть. Нумайăшне çак пурнăçра тытăнса юлма çăмăлах килмест. Хăшĕ-пĕри йĕркеллĕ мар йăла условийĕсенче пурăнать, теприсем ватлăх чирĕсемпе е пĕчченлĕхпе аптăраççĕ. Çавăнпа та аслă ăру çыннисемшĕн тимлесси патшалăхăн социаллă политикин тĕп пайĕ пулса тăрать.

2013 çул вĕçленнĕ тĕле Чăваш Республикинче ватă çынсемпе инвалидсене социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен стационарлă учрежденисем 9 шутланнă. Стационарлисемсĕр пуçне республикăра пĕччен пурăнакан ватă граждансен ятарлă çурчĕ пур. Унта 44 çын. Çавăн пекех республикăра социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен центрсем 24. Вĕсенче вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмсем 43, кăнтăрла пурăнмалли уйрăмсем 8 йĕркеленĕ. Анчах та вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмсенчи вырăнсен шучĕ юлашки 5 çул хушшинче 764-ран 688 юлнă е 9,9 процент чакнă.

Кунсăр пуçне ватă çынсемпе инвалидсене социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен центрсемпе уйрăмсем 2013 çулта 3721 çынна килĕсенче пăхса тăнă. Стационарлă учрежденисене вырнаçтармаллисен черетĕнче 243 çын.

Тата акă мĕн интереслĕ. Енчен те малтанхи вăхăтра аслă ăру çыннисен социаллă çыхăнăвĕсем анлах пулман пулсан, хальхи вăхăтра пенсионерсем вăхăтпа тан пурăнаççĕ. Вĕсем социаллă сетьсенче пĕр-пĕринпе çыхăнаççĕ, форумсене, интерессене кура тĕрлĕ пĕрлешÿсене активлă хутшăнаççĕ, хăйсене пĕчченлĕхре туймаççĕ. 2013 çулта суйласа илсе тĕрĕслевсем ирттерни çавна кăтартса панă: 55 – 74 çулсенчи асаттесемпе асаннесен 14,5 процентĕ Интернет сечĕпе усă курать, электрон мелĕпе кĕнекесемпе тата статьясемпе паллашать.

Вăт çавăн пек вăл хальхи пенсионер. Тĕрĕсрех каласан, хулара пурăнакан тата уйăхне 9 пин тенкĕне яхăн пенси илекен хĕрарăм пенсионер. Унăн телевизор экранĕ умĕнче ларса Бразили сериалĕсене пăхса хурланма вăхăт çук. Уншăн пурнăç тĕллевĕ – унччен анлă сарăлнă лозунг – "Çын хăйĕн телейне хăй тупать". Çавăнпа та вăл ун валли çак телее кам та пулин тупасса кĕтмест. Хăйĕншĕн хăех тăрăшать.

**Чăвашстат.**

**СĂМАХ МАЙ. Пенси фончĕн районти управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх районта 2014 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 9935 пенсионер пурăннă. Пĕччен пурăнакан ватă çынсем 435-ĕн. Вĕсенчен 95 çынна социаллă ĕçченсем килĕсенче пăхса тăрассине йĕркеленĕ.**

**Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем 47 çын. Ĕç ветеранĕсем 4015-ĕн.**

**Пенси ÿсĕмне çитнисенчен ытларахăшĕ ĕç пенсине илсе тăрать. Кун пеккисем 8248 çын. Вĕсен шучĕ кăçалхи 9 уйăх хушшинче 32 çын чухлĕ чакнă. Ĕç пенсийĕн вăтам виçи 2014 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 9458 тенкĕ те 70 пуспа танлашнă е çулталăк пуçламăшĕнчипе танлаштарсан вăтамран 730 тенкĕ те 47 пус ÿснĕ.**

**Пулăшу**

## Вакански – терминал урлă

Чăваш Енри ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсен тĕп задачисен шутне хальхи вăхăтра Украина гражданĕсене ĕç тупма пулăшасси те кĕрет.

Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне республикăна килнĕ Украина гражданĕсенчен 289-шĕ (килнисен ĕçлеме пултаракан ÿсĕмĕнчи 39,3 процентĕ) ĕç тупнă. Вĕсенчен 214-шĕ – ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă.

Чăваш Енри ĕçпе тивĕçтерекен служба Чăваш Ене килсе тĕпленсе ĕç тупас текенсем валли вакансисен банкне хатĕрленĕ. Сентябрь вĕçĕ тĕлне унта республикăри 144 организацире 1886 ĕç вырăнĕ пуррине палăртнă.

Украинăран килме тивнĕ çынсем валли ĕç тупма пулăшассинче хушма мерăсем те йышăннă. Çакна май тĕп хулари ĕçпе тивĕçтерекен центр Раççей Перекет Банкĕпе килĕшÿ тунă. Халĕ банкăн терминалĕсенче (Шупашкарта 80 ытла) вакансисемпе те паллашма май пур. Çапла вара Украинăран килнĕ граждансем хăйсем тĕллĕн те ĕç шырама пултараççĕ.

**Пĕрлехи информаци ресурсĕ**

## Информаци кирек камшăн та усă

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн май уйăхĕнчи указĕсене пурнăçа кĕртсе пынă май тата çĕр участокĕсен çаврăнăшне эффективлă йĕркелес, çакна уçăмлă тăвас тĕллевпе, çавăн пекех çĕр участокĕсем пирки кирлĕ информацие пурте илме пултарччăр тесе Чăваш Республикинче тĕрлĕрен çурт-йĕр тума палăртман çĕр участокĕсен пĕрлехи информаци ресурсне йĕркелес ĕç пырать.

Пĕрлехи информаци ресурсĕнче Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи, муниципалитет харпăрлăхĕнчи, çавăн пекех вĕсем тĕлĕшпе патшалăх харпăрлăхне чикĕленĕ çурт-йĕр тума палăртман çĕр участокĕсем пирки сведенисем пур. Ку çĕр участокĕсемпе эконом класлă çурт-йĕр строительстви валли; промышленноç паркĕсем, технопарксем, бизнес-инкубаторсем йĕркелемелли объектсене вырнаçтарма тата территорисене ытти тĕрлĕ аталантарма усă курма пултараççĕ. Ресурс çĕр участокĕ ăçта вырнаçнине тата мĕнле çĕрсемпе чикĕленсе тăнине палăртма май парать.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн XX сессийĕнче тухса калаçнă чухне çапла палăртрĕ: "Инвесторсен ирĕклĕ çĕр участокĕсем ăçта вырнаçни тата вĕсен лаптăкĕ, инфраструктура пуррипе çукки пирки тĕп-тĕрĕс информаци илме, çак даннăйсене тĕпе хурса инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртесси пирки йышăну тума майсем пулса тăчĕç".

Паянхи куна пĕрлехи информаци ресурсĕнче 196 çĕр участокĕ пирки сведенисем вырнаçтарнă. Вĕсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 550 гектар. Вăл шутран пурăнмалли çурт-йĕр тумалли çĕр участокĕсем 82 (пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 219 гектар), инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртме усă курмаллисем 114 (пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 331 гектар).

2014 çул пуçланнăранпа ресурса 68 çĕр участокĕ пирки сведенисем кĕртнĕ. Вĕсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 155 гектарпа танлашать. Малашлăхри тĕп задача ресурса кĕртнĕ çĕр участокĕсемпе усă курма пуçăнасси, вĕсем çинче экономикăн тĕрлĕ отраслĕсене аталантармалли ятарлă проектсене вырнаçтарасси пулса тăрать.

Аса илтеретпĕр. Çак вăхăта торгсем ирттерсе пĕрлехи информаци ресурсне кĕртнĕ 45 çĕр участокне арендăна парассипе тата сутасси-туянассипе килĕшÿсем тунă. Вĕсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 52,9 гектарпа танлашать.

Пĕлме. Çынсене йÿнĕрех хакпа хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерессси Чăваш Республикин влаç органĕсем умĕнче тăракан хальхи тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Çурт-йĕр тума палăртман çĕр участокĕсен пĕрлехи информаци ресурсне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2012 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнчи 114 № "О дополнительных мерах по стимулированию развития жилищного строительства в Чувашской Республике" Указне тата Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Путинăн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи хушăвне тĕпе хурса строительство валли усă курмалли çĕр участокĕсем пирки кирлĕ информацие пурте илме пултарччăр тесе йĕркеленĕ.

Хăйĕн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи 600 № "О мерах по обеспечению граждан Российской Федерации доступным и комфортным жильем и повышению качества жилищно-коммунальных услуг" Указĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма шутлакан çемьесен 60 процентне 2020 çулччен йÿнĕ хакпа хăтлă хваттерсемпе тивĕçтерме задача лартрĕ. Паллă ĕнтĕ, çак задачăна пурнăçлас пулать.

Пысăк укçа-тенкĕпе çыхăнман эконом класлă çурт-йĕрт тăвасси пурăнмалли çурт-йĕр строительствин аталанăвĕн малашлăхри тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри пулса тăрать. "Общественное мнение" фонд ирттернĕ ыйтăм кăтартăвĕ тăрăх Раççейре хуласенче пурăнакансенчен 30 процентĕ ытла хула тулашĕнче пурăнмалли çурт тата çĕр участокĕ тытасшăн.

**Ирина ХУРАСЬКИНА, Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн пресс-секретарĕ.**

***Сăмах май. Муркаш районĕнчен асăннă пĕрлехи информаци ресурсне 6 çĕр участокĕ пирки сведенисем вырнаçтарнă. Москакасси ял тăрăхĕнчен – ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ икĕ участок: пĕри (3,91 гектар) республика харпăрлăхĕ шутланать, тепĕр участок (2,43 гектар) муниципалитет харпăрлăхĕнче. Çатракасси ял тăрăхĕнчен 18 гектар йышăнакан çĕр участокне ресурса кĕртнĕ. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ ку çĕр участокĕн патшалăх харпăрлăхне чикĕлемен. Мăн Сĕнтĕртен 2,4 гектар йышăнакан çĕр участокне пĕрлехи информаци ресурсĕнче шута илнĕ, промышленноç çĕрĕ шутланать, республика харпăрлăхĕнче. Шатракассинчен ресурса кĕртнĕ 0,1 гектар йышăнакан çĕр участокĕ ял çĕрĕ шутланать, республика харпăрлăхне кĕрет. Шетмĕпуçĕнчен ресурса кĕртнĕ кун пек çĕр участокĕн лаптăкĕ 0,9 гектар.***

Районадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2014 çулхи августăн 22-мĕшĕнчи 843 номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентес тата воспитани парас ĕçре ӳсĕмсем тунăшăн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

- Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта акăлчан чĕлхине вĕрентекен **Людмила Валерьевна ВАНЮШКИНĂНА**;
- Калайкассинчи вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен **Наталия Геннадьевна ИВАНОВĂНА**;
- Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта географи предметне вĕрентекен **Ангелина Геннадьевна МОКЕЕВĂНА**;
- Муркашри вăтам шкулта биологи предметне вĕрентекен **Инна Ивановна ПЕТРОВĂНА**;
- Мăн Хураçкари тĕп шкулта пуçламăш классене вĕрентекен **Валентина Ивановна УГЛЕВĂНА**.

2. Вĕренӳ сферинче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн:

- Йӳçкассинчи вăтам шкулти бухгалтера **Елена Михайловна РЫБНИКОВĂНА**;
- Йӳçкассинчи вăтам шкулти библиотекаре **Валентина Вениаминовна СЕМЕНОВĂНА**.

3. Ветеринари сферинче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн – Муркашри выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин ертсе пыракан ветеринари врачне **Татьяна Витальевна КИСЕЛЕВĂНА**.

4. Гражданoccене страхласа хӳтĕлессинче, уйрăм çынсемпе организацисен пурлăх интересĕсене хӳтĕлессинче ăнăçусем тунăшăн – "Росгосстрах" пĕрлешĕвĕн Муркашри филиалĕн страхлакан пайăн агентне **Нина Андреевна КАЛАШНИКОВĂНА**.

***Нефть тата газ промышленноçĕн сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн 2014 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕнчи 869-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе акционерсен "Газпром газораспределение Чебоксары" уçă обществин Муркашри филиалĕн çак ĕçченĕсене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Владимир Ильич КОЛБАСОВА**, аварипе диспетчер службин аслă маçтăрне;
– **Светлана Алексеевна ПЫРКИНĂНА**, персоналпа ĕçлекен пай специалистне;
– **Калина Фоминична СМИРНОВĂНА**, производство пӳлĕмĕсен уборщицине – администраципе хуçалăх пайĕн дворникне;
– **Луиза Александровна ШАДРИНĂНА**, бухгалтери учечĕн пайĕн бухгалтерне;
– **Анатолий Николаевич ЧЕРНОВА**, автомобиль водительне – аварипе диспетчер службин газ оборудованине ĕçлеттерекен тата юсакан слесарьне.

***Район администрацийĕн 2014 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕнчи 929 номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентес тата воспитани парас ĕçре ӳсĕмсем тунăшăн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

- "Лебедушка" ача сачĕн воспитательне **Лариса Александровна АКСЕНДАРОВĂНА**;
- "Малыш" ача сачĕн воспитательне **Раиса Пименовна ИЛЛАРИОНОВĂНА**;
- "Солнышко" ача сачĕн музыка ертӳçине **Елена Петровна ЛЮБИМОВĂНА**;
- "Василек" ача сачĕн воспитательне **Валентина Сергеевна НИТКИНĂНА**;
- "Улыбка" ача сачĕн воспитательне **Дина Васильевна ПУГАЧЕВĂНА**;
- "Путене" ача сачĕн воспитательне **Алина Львовна ТИХОНОВĂНА**;
- "Путене" ача сачĕн воспитательне **Татьяна Димитриевна ТОЛСТОВĂНА**;
- Катькасри пуçламăш шкул-ача сачĕн воспитательне **Вера Михайловна ФРОЛОВĂНА**.

2. Вĕренӳ сферинче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн:

- "Радуга" ача сачĕн поварне **Людмила Леонидовна ИВАНОВĂНА**;
- "Золушка" ача сачĕн поварне **Светлана Алексеевна ИВАНОВĂНА**;
- "Березка" ача сачĕн воспитателе пулăшаканне **Раиса Алексеевна ЛЮБИМОВĂНА**.

***Районти Чкалов ячĕпе хисепленекен тата "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕсем ыйтнипе ял хуçалăх производствинче нумай çул ăнăçлă та тухăçлă ĕçленĕшĕн район администрацийĕн авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнчи 931 номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн экономистне **Вера Николаевна НИКИФОРОВĂНА**;
– "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп инженерне **Вадим Владимирович ВАСИЛЬЕВА**.

***Район администрацийĕн 2014 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнчи 939 номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентес тата воспитани парас ĕçре ӳсĕмсем тунăшăн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

- Шурчари тĕп шкулта пуçламăш классене вĕрентекен **Татьяна Васильевна АНДРЕЕВĂНА**;
- Атапайри тĕп шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен **Алиса Николаевна ИВАНОВĂНА**;
- Чуманкассинчи вăтам шкулта химипе биологи предмечĕсене вĕрентекен **Елена Ивановна КАДЫКОВĂНА**;
- Ориninти вăтам шкулта математикăпа физика предмечĕсене вĕрентекен **Екатерина Алексеевна КОЛЬЦОВĂНА**;
- районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – "Сывлăх" ФСК тренер-преподавательне **Валерий Петрович ЛЕОНТЬЕВА**;
- Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен **Раиса Владимировна НИКОЛАЕВĂНА**;
- Муркашри вăтам шкулта физкультура вĕрентекен **Сергей Дмитриевич ПАЛАДЬЕВА**;
- районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – "Сывлăх" ФСК тренер-преподавательне **Олег Артурович СЮТРУКОВА**;
- Чуманкассинчи вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен **Валентина Энгельсовна ФЕДОРОВĂНА**.

***Район администрацийĕн 2014 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнчи 947 номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

Халăх сывлăхне сыхлассинчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

- Муркашри тĕп больницăн участокри врач педиатрне **Ирина Владимировна ВОЛКОВĂНА**;
- Муркашри тĕп больницăн ультразвук диагностикин врачне **Алина Геннадьевна ХРОМОВĂНА**.

# "Ачасем лайăххраххине тивĕç"

Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

**Çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссин черетлĕ ларăвĕнче сăмах ытларах ачасене ашшĕ-амăшĕнчен хӳтĕлесси пирки пулчĕ.**

Нумаях пулмасть Юнкă ял тăрăхне пурăнма куçса килнĕ хĕрарăм хăйне тивĕçлĕ тытманнипе часах полицейскисен куçне курăнма тытăннă. Икĕ ача амăшĕ эрехпе туслă-мĕн.

Сентябрь уйăхĕнче кăна-ха районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен сотрудникĕсем çак çемьере икĕ хутчен пулса курнă. Пĕрремĕшĕнче çамрăк хĕрарăм полицейскисене ура çинчех кĕтсе илме "вăй çитернĕ" пулсан, иккĕмĕшĕнче вăл "ывăннипе" çывăрнă.

– Хĕрарăм ачисене тивĕçлĕ условисем йĕркелесе паманнине тата ун патĕнче яланах ют çынсем пухăннине кура пирĕн пата хыпарсем çитрĕç, – каласа парать ĕç-пуç пирки И. Игнатьева полици сотрудникĕ. – Чăнах та сентябрĕн 6-мĕшĕнче унăн килĕнче тасамарлăх, тирпейсĕрлĕх хуçаланатчĕ. Хăй ӳсĕр, ют арçын пурччĕ. Ачасене валли мĕнле условисем пуррипе кăсăклантăмăр. Ача уроксене ăçта тунипе интересленсен вара вăл пире шкулта тесе хуравларĕ.

Çак икĕ ача амăшĕ тĕлĕшпе пухнă ĕç материалĕнче пӳртри лару-тăрăва сăнласа паракан сăн ӳкерчĕксем те пурччĕ: пӳртре урок тума мар, ура пусма вырăн çук.

– Ун чух пӳртре юсав ĕçĕсем тума пуçланăччĕ, – тӳрре тухма хăтланчĕ хĕрарăм.

Комиссия членĕсем вара çакăнпа килĕшме пултараймарĕç: юсав чух кашни япалана тирпейлĕн ещĕксене хурса пĕр вырăна пухса хуратăн пулĕ, пӳрчĕпе ăçта кирлĕ унта çи-пуç, савăтсапа выртни юсав пынине шăпах хирĕçлет.

Тепĕр хутĕнче хĕрарăм патĕнче пачах та урăх арçын пулнă, хăй вара çывăрнă. Çав каçах, ачи киле пыман пулин те, вăл ăна каç кӳлĕм "таçта та шыранă" хыççăн чиперех çывăрма выртнă, полицине те пĕлтермен. Юрать, ача ялти çынсем патĕнче чиперех çĕр каçнă.

– Эпĕ юсанатăп, учета ан илĕр. Ачасене лайăх пултăр тесе пĕтĕмпех тăвăп, – тесе ыйтрĕ хĕрарăм.

– Ачасем лайăххраххине тивĕç, – пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне комисси председателĕ Л. Тарасова.

Ачасемшĕн хăрушлăх пуррине кура комисси членĕсем, паллах, çак çемьене учета илме йышăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ çемье яланах куç умĕнче пулĕ.

Ларура тухнă тепĕр ыйту çинче те чарăнмасăр иртме çук. Районта тĕрлĕ сăлтава пула ачасем вилни пирки пĕлтĕр уйрăмах "хытă" калаçрĕç. Калаçма, пăшăрханма, профилактика ĕçне вăйлатма лару-тăрăвĕ те хистерĕ çав: аслисемпе пĕрле çывăрнă кăкăр ачи тепĕр ирхине "вăранман" тĕслĕх пĕрре мар пулнăччĕ.

Ку хутĕнче ларура Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăма та çакăн пиркиех асăрхаттарчĕç. Малтан та комисси ларăвĕнче темиçе хутченех пулнăскер вăл кашни ачинех пĕчĕк чух хăйпе пĕрле çывăрттарнине каларĕ. Комисси енчен тĕрлĕ сĕнӳ пулчĕ, çапла вара ача валли ятарлă вырăн çук пулсан ăна коляскăра пĕччен çывăрттарма сĕнчĕç хĕрарăма. Калани амăш чĕри патне çитнине шанас килет – пĕтĕмпех ун ачин хăрушсăрлăхĕшĕн-çке.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Октябрĕн 9-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери почта кунĕ

# Чехословакирен çыру илнĕччĕ

Календарьте октябрĕн 9-мĕшне Пĕтĕм тĕнчери почта кунĕ тесе палăртнă. Раççей почтин кунĕ те пур-ха. Ăна июль уйăхĕнче паллă тăватпăр. Эпĕ вара пĕтĕм тĕнчери почта çыхăнăвĕпе усă курнине аса илтĕм.

Ун чухне институтра вĕренеттĕмĕр. Преподаватель килти ĕçсене пурнăçлама ялан тенĕ пекех "Ноез Дюнгланд" хаçатран 2 – 3 статья вырăсла куçарма парса яратчĕ. Хаçачĕ, паллах, Германире тухса тăнă.

Каярахпа, вĕренсе пĕтерсе колхозра ĕçлеме пуçăнсан, пĕр çулхине мăшăрпа тата ачасемпе пĕрле мăшăрăн ашшĕ-амăшĕ патне Мăн кун кĕтсе илме кайрăмăр. Пăхатăп та, сĕтел çинче хаçатсемпе пĕрле пĕр конверт выртать. Çиелте "Прага" тесе çапнă почта штампĕ пур.

Килтисемпе калаçатăп. Прага Чехословаки çĕршывĕн тĕп хули вĕт-ха? Кам пулма пултарĕ унта вĕсене пĕлекен-паллакан?

Ĕçĕ акă мĕнле пулса тухнă иккен. Манăн мăшăрăн пиччĕшĕн арăмĕ Украинăран – украинка. Унăн йăмăкĕсем аппăшĕпе йыснăшне тата ыттисене те Мăн кун уявĕпе саламласа çыру янă иккен. Адресне кăтартнă чухне вара "ЧАССР" вырăнне "ЧССР" тесе çырса хунă. Почтăран çырăва тӳрех Чехословакие – Прагăна ярăнтарнă. Адресне тĕрĕс мар кăтартнă тесе Прагăри почта ĕçченĕсем çырăва пăрахман, çак пăтăрмахран тивĕçлипе тухнă. Мĕншĕн тесен йăмăкĕсем малалла адресне тĕплĕнех кăтартнă пулнă: г. Чебоксары, Чебоксарский район, малалла ял Совечĕн ячĕ т. ыт. те.

Прагăри почта ĕçченĕсене эпĕ ун чухне çав тери ырланăччĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне питĕ тимлĕ пурнăçланă. Халĕ те почта ĕçченĕсем унта çавăн пекех ĕçлеççĕ пулĕ тесе шухăшлатăп.

**Н. ПЕТРОВ, ĕç ветеранĕ.**

Нискасси ялĕ.

# Çыннăн çынах пулмалла

Специалистпа калаçатпăр

Юлашки вăхăтра "спайс" сăмах телевиденипе радиора та, хаçат-журналта та час-час илтĕнет. Акă Шупашкарта та "чан çапса ячĕç" – сентябрĕн юлашки кунĕсенче 40 ытла çынна наркăмăшланнине пула больницăсене леçме тивнĕ. Кун пирки хăйĕн сайтĕнче REGNUM информаци агентстви хыпарлать. ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ А. Самойлова пĕлтернĕ тăрăх сентябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне наркăмăшланнă 42 çынран 15-шĕ больницăна шăпах Сургутра тата Кировра тупса палăртнă хутăшсемпе пĕр евĕр хутăш йышăннă хыççăн лекнĕ, ыттисем – урăх наркотик е алкоголь продукцийĕпе наркăмăшланнисем.

Экспертсем "спайсра" (вĕсене "туртмалли хутăш" та теççĕ) сывлăхшăн сиенлĕ психостимуляторсем пуррине калаççĕ. Çавăнпах Раççей правительствин йышăнăвĕпе "спайссене" психотроп хутăшĕсен йышне кĕртнĕ. Апла пулсан вĕсемпе саккуна хирĕçлесе усă курни Уголовлă кодекспа тачă çыхăннă. Çапла вара "спайс" туса кăларакансем те, ăна упракансем те, саракансем те, ăна йышăнакансем те саккун умне тăма тивĕç.

Пирĕн районта иртнĕ кунсенче кăна-ха "спайспа" усă курнăшăн пĕр çамрăка учета илчĕç. Кун пирки Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени ертӳçи О. Яковлев пĕлтерчĕ. Апла пирĕн урамсенче те хăрушлăх пур. "Мĕншĕн тесен "спайса" ытларах Интернет урлă сараççĕ, çавăнпа та çакна контрольлеме те йывăр. Тата чару списокне кĕртме ĕлкĕреймен хутăшсене сараççĕ", – пĕлтерчĕ Олег Николаевич.



*"Спайс" хăрушлăхĕ пирки калаçма вара эпир Муркашри район тĕп больницин нарколог врачне Александр СТРОГАНОВА редакци тĕпелне чĕнтĕмĕр.*

**– Александр Андреевич, ăнлантарса парăр-ха, тархасшăн, мĕн вăл "спайс"?**

– Çакă вăл – тĕрлĕ курăкран хатĕрленĕ хутăш. Унра синтетика веществосем тата энтеогенсем (çын организмĕ çине психотроп витĕмне кӳрекен веществосем) пур. Кĕскен çапла.

**– Апла пулсан унăн витĕмĕ çын психикинче йĕр хăвармасăр иртмест. Çак хутăша туртни мĕнпе хăрушă?**

– Çакăн евĕр хутăшсене туртнăран çыннăн организмĕ чи малтанах психика тĕлĕшĕнчен хытă хавшать. "Спайссен" витĕмĕ йывăр наркотик йышăннă хыççăнхи пекех. Пĕрмаях "спайс" йышăннăран çынна темĕн те пĕр куçа курăнма тытăнать, вăл лăпкăлăх çухатать, ăна хăстарать, унăн кăмăл-туйăмĕ темрен питĕ хăранă çыннăнни пек пулать.

**– Шалти органсем пирки калас пулсан вара?**

– Организм пĕтĕмĕшле асапланать: ӳпке, таса мар юна тасатма тивекен пĕвер, пуç мими тата ытти органсем те сиенленеççĕ. "Спайс" миме çине уйрăмах йывăр витĕм кӳрет. Мимери вĕтĕ юн тымарĕсем "управлени центрне" наркăмăш ярас мар тесе çийĕнчех пĕрĕнеççĕ. Çапла вара юн мимене кислородпа та тивĕçтерейместь. Ытти клеткăсем пекех, кислород çитмен миме клеткисем те вилеççĕ. Спайс туртакансем шăпах çак пулăм вăхăтĕнче урăх нимĕн пирки те шутламаççĕ, вĕсене нимĕн те кирлĕ мар. Анчах та çак темиçе сехетлĕх суя савăнăçа миме вилсе пыни çине улăштармаллах-ши?

**– Апла пулсан çын, каçарăр та, "пахча çимĕç" вырăннех юлать вĕт-ха.**

– Тĕрĕсех. Çак хутăш арçынсен потенцине чакарать, хĕрарăмсен те арлăх органĕсемпе çыхăннă йывăрлăхсем пуçланаççĕ, çавна май вĕсем ачаллă пулаймаççĕ. Апла пулсан кун пек çынсен пĕрлешсе çемье çавăрсан та йĕркеллĕ çемье пулмасть. Çавăнпа та "спайс" тутанса пăхиччен кашнин шутласа пăхмалла: темиçе сехетлĕх суя савăнăç кирлĕ-и е ĕмĕр тăршшĕпех – йĕркеллĕ те телейлĕ пурнăç. Каламасăрах паллă, иккĕмĕшне суйламалла.

**– "Спайс" пуçа çав тери минретнĕрен харпăр хăй çине алă хурасси те инçе мар пулĕ?**

– "Спайсра" синтетика хутăшсем пулнăран унăн пĕчĕк дози те организма çав тери пысăк сиен кӳрет. "Спайс" йышăннă хыççăн тӳрех куçа темĕн те пĕр курăнма пуçлать. Çак пулăм инкек патне илсе пырасси те паллă: çынсем килекен машина айне пулас тесе ун умне чупса тухаççĕ, нумай хутлă çуртсенче пурăнакансем чӳречерен сикеççĕ тата ытти те. "Спайс" йышăннă хыççăн çапла майсемпе пурнăçран уйрăлнă тĕслĕх нумай.

**– "Спайс" йышăннинче чи хăрушши мĕн?**

– Чи хăрушши – çын ăна хăнăхни тата йышăннă вăхăтра "ломка" пулни. Çак вăхăтра вăл хăйĕн пурнăçĕпе сывлăхне хăрушлăх умне кăларса тăрататать кăна мар, ытти çынсемшĕн те хăрушă пулса тăрать. Апла пулсан чи тĕрĕсси – çак ăпăр-тапăра хамăр çывăха ямалла мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**



# ПИРĔН ПАТА ÇЫРАÇÇĔ



## Пурнăç çăмăлах килмерĕ




Пирĕн, "вăрçă ачисен", вăрçă пынă вăхăтра та тата ун хыççăн та пурнăç çăмăл пулман. Уйри пĕтĕм ĕçе лашасемпе тата алă вăйĕпе пурнăçланă. Тыррине çурлапа вырнă. Улăх-çаранти утине çавапа çулмалла пулнă. Çуллахи вăхăтра тырă вырма тухиччен пĕр уйăх хушши çул-йĕр тунă çĕрте ĕçленĕ. Пур ĕçе те вăхăтра тумалла пулнă. Уй-хирте тырă вырмасăр хăварман. Улăх-çаран утине те пĕтĕмпех çулса тирпейлесе пуçтарса кĕртнĕ.

Ирхине тул çутăличчен тăрса ĕçе каяттăмăр. Тĕттĕм пуличченех ĕçлеттĕмĕр. Каçхине киле таврăнсан ывăннине сисмесĕрех çывăрса кайнă. Çимелли те çителĕклĕ пулман. Ирхине çывăрса тăрсан пуç çаврăнса каятчĕ. Çапах та эпир чăтнă. Укçа-тенкĕ тата тырă-пулă мĕн чухлĕ парасси çинчен нихăçан та ыйтман.

Çимелли çук пулсан та патшалăха çăмарта, çу, аш-пăш памалла пулнă. Уншăн укçине те тӳлемен. Вуттине те хамăрăнах хатĕрлеме тиветчĕ. Вăрмантан хăрăк турат пуçтарса килеттĕмĕр. Çаппине вăрман хуралçисем парса яман, çĕклемне салатса тăкатчĕç. Çăпата тума çăка хунавĕ каснăшăн та штрафĕ питĕ пысăк пулнă.

Хальхи пурнăçа илес пулсан лайăх еннелле çав тери улшăнчĕ вăл. Ялсенче газĕ те, электричество çути те пур. Ытларах çĕрте асфальт çул сарса панă. Елĕкрех Шупашкара, Муркаша çуран çӳренĕ пулсан, халĕ хамăрăн Йӳçкассинченех куллен 10-шар рейс автобус çула тухать.

Хĕрарăмсене ача çуратнăшăн пособисем сахал мар тӳлеççĕ. Çамрăк çемьесене, специалистсене пурăнмалли çурт-йĕр çавăрма патшалăх укçа-тенкĕпе пулăшать. Пенсионерсене те пенси укçине вăхăтра тӳлесе тăраççĕ. Пĕчĕкрех тупăшлă çемьесене коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемешкĕн субсидисемпе тивĕçтереççĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсенче, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ĕçсене ял хуçалăх техникипе пурнăçлаççĕ. Юлашки вăхăтра хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ирĕклĕн аталанма пуçларĕç. Килти хушма хуçалăхсенчен сĕт пуçтарассине йĕркелени те ял çыннишĕн меллĕ те усăллă. Выльăх-чĕрлĕх тытса усракана çакă укçа-тенкĕ тума май парать. Ватăрах çынсемпе калаçатăп та, пурте тенĕ пекех вĕсем паянхи пурнăçпа кăмăллă.

Йӳçкасси ял тăрăхĕнче кашни çулах Ватă çынсен кунне Йӳçкассинчи информаципе культура центрĕнче ирттереççĕ. Çулленех унта хăй вăхăтĕнче производствăра ырми-канми ĕçленĕ çынсем йышлă пухăнаççĕ. Ватă çынсем пĕрпĕринпе курса калаçаççĕ, пухăннисене яланах тутлă апатçимĕçпе хăналаççĕ.

Эсир Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ, Муркаш районĕн хисеплĕ çынни Николай Яковлевич Лукин иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче кăранташпа ӳкернĕ ӳкерчĕке куратăр. Вăл мана, 9 çулхи ачана, лашасем пăхнă вăхăтра ӳкернĕччĕ.

Нумай çын манран Н. Яковлев сывлăхĕ пирки ыйтса пĕлет. Вăл халĕ тухса çӳреймест. Çитес çул, январĕн 31-мĕшĕнче, 90 çул тултарать. Октябрĕн 1-мĕшĕнчи Ватă çынсен кунĕ ячĕпе саламланă май вара пурне те ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр, çемье ăшши сунатăп.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**
Хурăнкасси ялĕ.

## 80 çулта тесе калаймăн



